Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи А. Г. Николаев ячĕллĕ Калайкасси шкулĕ

# ХЫÇАЛТИ ПАРТА

interhypar@mail.ru

*Кайри мала!*

#1 /05/ 2007



*Шкул ачисен хаçачĕ* Кăрлачăн 25-мĕшĕ — Нарăсăн 8-мĕшĕ

## ЮМАХРИ АСАМЛĂ ВĂРМАН

**Пĕлетĕр-и, ачасем? Калайкасси шкул садĕнче... чăн-чăн юмахри пекех! Сада тухатăн та тĕлĕнсе каятăн — кам кăна çук пуль кунта?! Хĕл Мучипе унăн мăнукĕ тăраççĕ, 2007 çулăн символне — сысна çурине — те юртан ăсталанă... Ачасем тăрăшнипе шкул сачĕ юмахри асамлă вăрман пек курăнса ларать.**

/Вĕçĕ 2-мĕш стр./



### ПĔР ИЛЕМЛĔ ĂШĂ КУН

Пĕр илемлĕ ăшă кун
Тухрĕç ачасем тула.
Тĕрлĕ-тĕрлĕ кĕлетке
Турĕç юртан тăрăшса:
Хĕл мучипе Юр пике,
Юмахри пек чĕр чунсем,
Тыткăнларĕç ман чуна
Пит илемлĕ-çке вĕсем!

Юрий ОСИПОВ,
7 класс,
Калайкасси шкулĕ

# АВАН-И?



**Акă «Хыçалти парта» хаçатăн черетлĕ номерне кăлартăмăр.**

Вăл улшăннă. Асăрхарăр-и? Пĕлес килет-и, мĕншĕн тата мĕн улшăннине? Хаçата уçăр та вулама пуçлăр. Э-э-э... «Хыçалти партăна» ан хуçлатăр. Тепĕр тесен, эсир хаçата çурмалла хуçлатса пырсан ăна 7 хут хуçлатма кăна пултаратăр. Анчах та унччен тăхтăр, сылтăм енне пăхăр. Эпир сире валли чи интереслине пухрăмăр.

Хм! Сирĕн шкул çинчен информаци çук. Кунта сăлтавĕ пĕрре кăна — редакцие хăвăрăн çинчен çырман. Пирĕн сирĕн çинчен юлхав ачасем тесе шутлас килмест. Хăвăрăн шкулта пулса иртнĕ мероприятисем, эсир кулăшла историсене лекни, сирĕн шухăш-кăмăл, критика — пĕтĕмпех пĕлес килет.

Тепĕр лайăх информаци. WWW.cap.ru патшалăх порталĕ çинче вырнаçнă Муркаш район сайчĕ çинче «Хыçалти парта» хаçат валли те вырăн тупăнчĕ. Унта хаçатăн номерĕсемпе тата редакципе паллашма, çитес вăхăтра тĕрлĕ кăсăклă информаци вулама пулать. Унсăр пуçне пире Чăваш Республикин культура министерствин сайчĕ çинчи «Тăван Сăмахра» та вырнаçма ирĕк панă.

«Хыçалти парта» хаçата пĕтĕм тĕнче вулать. Chuvash.org канашлу сайчĕ çинче эпир тухнă-тухман хаçат содержанине сÿтсе явма пуçланă. Калăпăр, Reflejo никпа çыракан çамрăк чăваш Америкăра ĕçлет, вăл «Хыçалти парта» «Тантăш» хаçатран та чăнкăрас тесе пĕлтернĕ. Калининградри чăваш йĕкĕчĕ Анатолий те /вăл халĕ Европăра пурăнать/ пире мухтать.

Хăвăрах куратăр — эпир аталанса пыратпăр.

**Оля АКСЯНДАРОВА**
**«Хыçалти парта» хаçатăн**
**Калайкасси уйрăмĕн редакторĕ**

## НОМЕРТЕ:

2 страница
ЭПИР ОЛИГАРХ АЧИСЕМ МАР

3 страница
ВĔРЕНЕС КИЛМЕСТ

4 страница
ХĔРСЕМ — ПАРАЗИТСЕМ!!!

5 страница
*«ЮРАТАТĂП САНА!» 86 ЧĔЛХЕПЕ*

8 страница
ВИКИПЕДИ — ТĔРЛĔ ЧĔЛХЕЛЛĔ ПĔЛŸ БАНКĔ

9 страница
*ЧĂВАШСЕН ÇĔНĔ ÇУЛĔ*